


## Шкулсенчен хыпарлаççĕ

### Сывлăх – чи пысăк мул

Пирĕн районта тĕрлĕрен тематикăпа иртекен конкурссемпе акцисем çултан-çул нумайлансах пыраççĕ. Тӳрех каласа хăвара-тăп, эпир, Шурча шкулĕнче вĕренекен ачасем, пур çĕре те хутшăнма тăрăшатпăр. Хутшăнма кăна та мар, малти вырăнсене йышăнассишĕн вăй хурса ĕçлетпĕр.

Пĕр уйăх çитрĕ ĕнтĕ районта "Çамрăксем – сывлăхлă пурнăç йĕркишĕн!" акци пуçăнни. Çак акци пирĕн шкул ачисемшĕн чи юратнисенчен пĕри. Тем тĕрлĕ мероприяти те ирттеретпĕр эпир шкулта ку тĕлĕшпе: тĕрлĕрен конкурссем, спорт вăййисем, куравсем. Сăвăсенче тата ӳкерчĕксенче ачасем хăйсен шухăштуйăмĕсене сăнласа кăтартаççĕ. Çав вăхăтрах тĕрлĕрен кулăшла самантсем шухăшласа кăларатпăр та, вĕсене сцена çинче вылятпăр. Ытти çулсенче çак акци вăхăтĕнче агитспектакльсен конкурсĕ иртетчĕ. Эпир икĕ çул хушши çак конкурсра район çĕнтерӳçисем пулма пултартăмăр. Республикăра вара 3-мĕш вырăн йышăнса киле кубокпа таврăннăччĕ. Кăçал агитспектакль хатĕрлемелле мар, анчах районти шкул командисем хушшинче сывлăх темипе КВН вăййи иртессе эпир пĕлетпĕр. Çак вăййа эпир те хутшăнса пăхасшăн-ха.

Пĕр сăмахпа каласан, шкулта ĕç вĕресех тăрать. "Çамрăксем – сывлăхлă пурнăç йĕркишĕн!" акци вăхăтĕнчи хăш-пĕр пулăмсем çинчен малалла пирĕн шкулти çамрăк корреспондентсем каласа парĕç. Эпĕ вара хам ятран пурне те сывлăхлă пулма сунасшăн. Сывлăх – чи хаклă пуянлăх-çке-ха!

**И. САВАТЕЕВА,**
**"Ассорти" ача-пăча пултарулăх пĕрлешĕвĕн ертӳçи.**

### Каникул кунĕсем усăллă иртрĕç

Тивĕшри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тулли мар вăтам шкулти линейкăра кĕркуннехи каникул пуçланни çинчен пĕлтерсен вĕренекенсем питĕ савăнчĕç. Вĕсене пĕр эрне хушши шкул çумĕнчи спортпа сывлăха çирĕплетмелли "Асамат кĕперĕ" лагерьте канма сĕнсен, унта çӳреме 15 вĕренекен кăмăл турĕç. Кашни кун ачасем спортзалта та, уçă сывлăшра та спорт вăййисем вылярĕç. Акă пĕрремĕш куннех икĕ команда хушшинче "Хаваслă стартсем" ăмăрту пулчĕ. Иккĕмĕш кунĕнче Тивĕше каникул вăхăтне ирттерме Шупашкартан килнĕ тантăшĕсен командипе футболла вылярĕç. Хăнасене 5:2 шутпа çĕнтернипе вĕçленчĕ вăйă.

Лагерьте канакансемпе тĕрлĕ воспитани мероприятийĕсем ирттерме палăртрăмăр: калаçусем, викторинăсем, конкурссем... Ачасен кану тата спорт мероприятийĕсене Олег Николаевич Ильин физкультура учителĕпе тачă çыхăнура туса ыратпăр.

Каникул кунĕсем ачасемшĕн усăллă иртрĕç. Шкул çуртĕнче вырнаçнă Тивĕшри тĕслĕх библиотека ертӳçи Е.Г. Ильина лагерьти ачасемпе вулав сехечĕсем, диспут тата кĕнекесен куравне ирттерчĕ.

**П. ЕФИМОВ, "Асамат кĕперĕ" лагерь ертӳçи.**

### Раççей Геройĕпе паллашрăмăр

Пирĕн шкулта Раççей Геройĕ Евгений Германович Борисов пулчĕ. Евгений Германович шкул ачисене хăйĕн пурнăç çулĕпе паллаштарчĕ. Раççей Геройĕн ятне тивĕçни çинчен каласа пачĕ. Ăна çак пысăк наградăна Кремльте Раççей Президенчĕ В.В. Путин панине пĕлтĕмĕр. Вăл шкул ачисен, учительсен нумай ыйтăвĕсене хуравларĕ.

**И. ГРИГОРЬЕВА.**

### Класс ĕçĕпе кăмăллă

Манăн юратнă хĕр Наталья иртнĕ çул Ярапайкассинчи шкула 1-мĕш класа кайрĕ. Ăна В.В. Воробьева учительница вĕрентнĕшĕн савăнатăп. Вăл ачасене пĕр ушкăна пĕрлештерме тăрăшать, тĕрлĕ мероприятисем ирттерет. Ашшĕ-амăшĕсем валли уçă уроксем те пулчĕç.

Кăçал манăн хĕрĕм иккĕмĕш класра вĕренет. Класс пурнăçĕ кăçал та питĕ интереслĕ иртет. Кĕрхи уявра иккĕмĕш класс ачисем пĕрремĕш вырăн йышăнчĕç, торт çĕнсе илчĕç.

Учительницăна хамăр та пулăшма тăрăшатпăр. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ умĕн класра юсав ĕçĕсем тума пулăшрăмăр.

**В. АБРАМОВА.**



# Правда народа - в ЛДПР !

Ввести подоходный налог в зависимости от дохода. Богатые должны платить больше.

Простить долги по квартплате на 1 января 2008 года. Государство должно взять на себя капитальный ремонт домов и коммуникаций.

Вернуть Резервный фонд в Россию! Все деньги назад в Россию.

Провести реформирование системы оплаты труда. Каждый час работы -100 рублей, восьмичасовой рабочий день - 800 рублей.

Выплатить компенсацию всем обманутым вкладчикам финансовых пирамид и всем обманутым дольщикам.

Наказывать коррупционеров до 25 лет тюрьмы с конфискацией всего имущества.

Провести амнистию с выходом на свободу до 200 тыс. осужденных.

Вернуть все долги военнослужащим и сотрудникам милиции за участие в вооруженных конфликтах. Наказать виновных в их задержке.

Восстановить северные коэффициенты.

Установить монополию государства на производство и сбыт спирта, табака и сахара. Государство должно вести все стратегические проекты. Остальные - частнику.

"Земля - крестьянам" остается актуальным лозунгом и сегодня. Крестьяне 100 лет не могут получить землю. Дать землю бесплатно всем, кто живет на селе.

Сократить ввоз импортного продовольствия в страну на 50%.

Большую часть продовольствия закупать внутри страны. Для чего во всех регионах страны создать заготовительные конторы.

Прекратить точечную застройку в городах! Сохранять и создавать новые детские площадки, скверы, места отдыха жителей.

Медицина должна оставаться бесплатной.

Необходимо сформировать средний класс населения (не менее 75%), как гаранта устойчивости и дальнейшего развития общества.

Присвоить звание "Ветеран труда" всем лицам с трудовым стажем 40 и более лет.

Принять меры по поддержке местного самоуправления в стране. Больше налогов оставлять на местах (до 70%).

Сегодня в России плохо с гласностью. ЛДПР будет требовать усиления свободной прессы.

Хорошее настроение граждан России - вот национальная идея. Чтобы в каждой семье, у каждого человека было просто хорошее настроение, была крыша над головой, работа, друзья, подруги, семья, спокойная жизнь, достаток, нужно научиться наслаждаться жизнью.

Только ЛДПР с вами! Построим будущее вместе!

Номер ЛДПР в списке для голосования - 7.

Публикуется бесплатно на основании ч. 1 ст. 59 ФЗ от 18 мая 2005 года № 51-ФЗ «О выборах депутатов ГД ФС РФ».